Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

*37 (8201) №* ✻ *Юн кун, 2014 ҫулхи ҫу (май) уйӑхӗн 21-мӗшӗ* ✻ *Хакӗ ирӗклӗ*

**Вӗрентӳ тата воспитани**

## "Ячӗсем тӗрлӗрен, тӗллевӗ – пӗрре"




Вӗренӳ чӗрӗкӗсен пӗтӗмлетӗвӗпе район администрацийӗн пуҫлӑхӗн стипендине тивӗҫнисем, Пӗтӗм Раҫҫейри шкул ачисен олимпиадин регион шайӗнчи призерӗсемпе ҫӗнтерӳҫисем, республикӑри ытти конкурсра малти вырӑн йышӑннӑ вӗренекенсем – пирӗн районти чи пултаруллӑ та хастар шкул ачисем майӑн 19-мӗшӗнче ача-пӑча общество пӗрлешӗвӗсен фестивальне тата Вӗренӳ кунне уявлама Муркаша пухӑнчӗҫ.

Тӗрлӗ наградӑсем, савӑнӑҫлӑ юрӑ-ташӑ, ачасен маршӗ – пӗтӗмпех вӗренекенсен кӑмӑлне хӑпартрӗ. Муркашри тури чӑвашсен музейӗн ӗҫченӗсем вара пионерсен юхӑмӗн историйӗпе паллаштарма музейри экспонатсене ачасем умне илсе тухса курав та йӗркелесе пачӗҫ. Горн, пионер галстукӗ, параппан, пионерсен ытти паллисем те пулчӗҫ кунта. Ачасем хаваспах сӑн ӳкерчӗксем турӗҫ.

Историе аса илтерекенсем те – чылай ҫул шкулсенче аслӑ вожатӑйра тӑрӑшнӑ педагогсем (хӑшӗсем хӗрлӗ галстук та ҫыхнӑччӗ) хӑйсен колоннипе ачасем умӗпе утса иртрӗҫ. Вӗсене саламласа пионери вӑхӑтне аса илчӗҫ.

Район администрацийӗн пуҫлӑхӗн стипендине тивӗҫнисем уявра ыттисенчен ытларах савӑнчӗҫ пулӗ. Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Р. Тимофеев ку вӗренӳ ҫулӗнче ачасен стипенди хӑпарнине пӗлтерчӗ. Малтанхи ҫулсенче вӑл 200 тенкӗ пулнӑ пулсан халӗ 400 тенкӗпе танлашать. Ростислав Николаевич вӗренӳре "пиллӗксемпе" ӗлкӗрсе пыракан ачасене стипенди парса саламларӗ, ҫуллахи ӗҫпе кану тапхӑрне те тивӗҫлӗ ирттермеллине аса илтерчӗ.

Ачасене район администрацийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ Л. Тарасова тата район администрацийӗн вӗренӳ, ҫамрӑксен политики тата физкультурӑпа спорт пайӗн пуҫлӑхӗ З. Дипломатова саламларӗҫ. Сирӗн пӗрлешӳсен ячӗсем тӗрлӗрен, анчах тӗллевӗ пӗрре тесе тӗрӗсех каларӗҫ вӗсем: лайӑх вӗренсе, общество пурнӑҫне активлӑ хутшӑнса, тӗрлӗ енлӗ аталанса чӑн-чӑн ҫын пулмалла. Вӗренекенсене аталанма вара халӗ услови ҫителӗклӗ.

**Сӑн ӳкерчӗкре: Москакассинчи вӑтам шкулти ачасем – уявра.**

**Н. НИКОЛАЕВА**
**сӑн ӳкерчӗкӗ.**

**Йыхрав**

## Июнӗн 12-мӗшӗнче – Акатуй

Ҫурхи ака-суха ӗҫӗсем вӗҫленнӗ ятпа ҫуллен ирттерекен ӗҫпе юрӑ тата спорт уявне кӑҫал июнӗн 12-мӗшӗнче Лантӑш вӑрманӗн уҫланкинче ирттереҫҫӗ. Ӑна район 70 ҫул тултарнине халаллать.

Ӗнер уява хатӗрленсе ирттерессипе йӗркелӳ комитечӗн ларӑвӗ пулчӗ. Ӑна район администрацийӗн пуҫлӑхӗ, йӗркелӳ комитечӗн ертӳҫи Р. Тимофеев ертсе пычӗ.

Ӗҫре палӑрнисене чысласси уявра тӗп вырӑнта пулӗ. Сумлӑ ӗҫ династийӗсем те ырӑ ята тивӗҫӗҫ. Нумай ачаллӑ ҫемьесене ҫӗр лаптӑкӗн свидетельствисем, амӑш капиталӗн сертификачӗсем парӗҫ. Уявра яланхи пекех юрӑ-кӗвӗ янӑрӗ. Художество пултарулӑх коллективӗсем, пӗрлештернӗ хор хӑйсен пултарулӑхӗпе савӑнтарӗҫ. Каруҫҫельсем, тӗрлӗ аттракционсемпе вӑйӑсем ачасене те, аслисене те тунсӑхлама памӗҫ.

В. Рубцова асӑнса ирттерекен волейбол вӑййине те чылайӑшӗ кӗтет. Хастаррисем кире пуканӗ ҫӗклессипе, турник ҫинче туртӑнассипе, алӑ вӑйне палӑртассипе, ирӗклӗ майпа кӗрешессипе ӑмӑртӗҫ.

Ял тӑрӑхӗсен администрацийӗсем хатӗрленӗ "Ял картишӗ" выставка та, тӗрлӗ техника ӑсталакансен "Муркаш Кулибинӗ" конкурс та кӑсӑклӑ пулӗ. Паллах, уявра темӗн тӗрлӗ тутлӑ апат-ҫимӗҫпе сӑйланма май килӗ.

Пурте – Акатуйне!

**Район уй-хирӗсенче**

## Ҫум курӑкӗпе кӗрешеҫҫӗ

Ҫур аки вӗҫленсе пынӑ май ҫӗр ӗҫченӗ акнӑ-лартнӑ культурӑсене пӑхса ӳстерессине, унти ҫум курӑкӗпе тата сӑтӑрҫӑсемпе кӗрешессине малти вырӑна кӑларать. Иртнӗ ытлари кун тӗлне районӗпе тӗш-тырӑпа пӑрҫа йышши культурӑсен анисем ҫинчи ҫумпа кӗрешсе ҫӗршер гектар ӗҫ пурнӑҫланӑ. Ку тӗлӗшпе хальлӗхе "Свобода" пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхпа А. Афанасьевӑн хресчен (фермер) хуҫалӑхӗнче, "Путь Ильича" агрофирмӑра ытларах ӗҫленӗ.

Ӗҫсем ытти хуҫалӑхсенче те вӑй илсе пыраҫҫӗ.

**А. БЕЛОВ.**

**Информаци кунӗ**

## Халӑхпа тӗл пулаҫҫӗ

Паян республикӑра информаци кунӗ иртет. Унӑн темисем анлӑ – Чӑваш Республикинчи 1 кварталти социаллӑ пурнӑҫпа экономика аталанӑвӗн пӗтӗмлетӗвӗ ҫинчен; ҫуллахи каникул вӑхӑтӗнче ачасемпе ҫамрӑксен сывлӑхне ҫирӗплетесси тата канӑвне йӗркелесси, вӗсене ӗҫпе тивӗҫтересси пирки; республикӑра халӑха ӗҫпе тивӗҫтерессинчи, ӗҫ рынокӗнчи йывӑрлӑха сирессинчи пулӑшу мерисем ҫинчен тата ӗҫ ресурсӗсемпе эффективлӑ усӑ курасси.

Пирӗн районта та информаци ушкӑнӗсем ҫула тухаҫҫӗ. Палӑртнӑ тӑрӑх ултӑ ушкӑн сакӑр ял тӑрӑхне ҫитмелле: Мӑн Сӗнтӗр, Ильинка, Юнкӑ, Шетмӗпуҫ, Ҫатракасси, Ярапайкасси, Катькас тата Чуманкасси ял тӑрӑхӗсене. Информаци кунӗн ӗҫ ушкӑнне ЧР ял хуҫалӑх министрӗн ҫумӗ Н. Якимов ертсе пырать. Ушкӑнсем ял тӑрӑхӗсенчи ӗҫ коллективӗсемпе тӗл пулусем ирттереҫҫӗ. Пӗрлехи информаци кунӗнче граждансене хӑйсен ыйтӑвӗсемпе те йышӑнаҫҫӗ.

**Спорт аталанӑвӗ**

## Ҫакна Муркашсем кӗтнӗ

"2006–2015 ҫулсенче Раҫҫей Федерацийӗнче физкультурӑпа спорта аталантарасси" федераци тӗллевлӗ программипе килӗшӳллӗн 2014 ҫулта субъектсен харпӑрлӑхӗнчи спорт сооруженийӗсене тума пурӗ 4,9 миллиард ытла тенкӗ уйӑрса пулӑшаҫҫӗ. 52 регионтан чи пысӑк субсидие – 334,5 миллион тенке Чӑваш Ен тивӗҫнине маларах пӗлтернӗччӗ.

Субсиди укҫи-тенкипе усӑ курса тӗрлӗ спорт объекчӗсем, вӑл шутра нумай функциллӗ спорт комплексӗсем, спортзалсем, бассейнсем, пӑр катокӗсем, тӳрем сооруженисем тата специализациленӗ сооруженисем хута ямалла.

Муркашра вара ҫак программӑпа килӗшӳллӗн хальхи вӑхӑта тивӗҫтерекен ҫӗнӗ тӳрем сооружени – стадион тума пуҫларӗҫ. Вӑл Муркашри вӑтам шкула хирӗҫ пулать. Майӑн 15-мӗшӗнче кунта "АвтоСпецСтрой" тулли мар яваплӑхлӑ пӗрлешӳ ӗҫе пуҫӑнчӗ.

Вырӑнти ӗҫ-пуҫ пирки тӗплӗнрех В. Егорова ячӗллӗ ачасемпе ҫамрӑксен 1 номерлӗ спорт шкулӗн Муркашри филиалӗн директорне Александр Сидюшкина каласа пама ыйтрӑмӑр:

– Ҫак стадиона тӑвасси "2006–2015 ҫулсенче Раҫҫей Федерацийӗнче физкультурӑпа спорта аталантарасси" федераци тӗллевлӗ программипе килӗшӳллӗн пулса пырать. Программӑпа тӳрем сооруженисене тума та укҫа-тенкӗ уйӑрса параҫҫӗ. Чӑваш Ен Спортпа физкультура аталанӑвӗн министерствин В. Егорова ячӗллӗ ачасемпе ҫамрӑксен олимп резервӗн специализациленӗ 1 номерлӗ спорт шкулӗ те субсидие тивӗҫрӗ. Ҫавна май Муркашра стадион тума 2 миллион тенкӗ уйӑрнӑ.

Ку стадион баскетболла тата волейболла вылякансене кӑна мар, мини-футбол тата гандбол вӑййисене килӗштерекенсене те кӑмӑла каймалла. Кунтах пысӑк теннисла выляма май пулӗ. Стадионта атлетика снарячӗсем те вырнаҫтарӗҫ.

Ӗҫсем мӗнле пынине куҫран вӗҫертмеҫҫӗ. Акӑ иртнӗ шӑмат кун район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Р. Тимофеев, район администрацийӗн капиталлӑ строительствӑпа обществӑлла инфраструктура аталанӑвӗн уйрӑмӗн пуҫлӑхӗ В. Никитин, асӑннӑ спорт шкулӗн филиал ертӳҫи А. Сидюшкин тата Муркаш ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ С. Ермолаев подрядчиксемпе канашланӑ. "АвтоСпецСтрой" пӗрлешӗвӗн генеральнӑй директорӗ Ю. Столбов пӗлтернӗ тӑрӑх вӗсем ӗҫе июнӗн 1-мӗшӗ тӗлне пӗтерме тӑрӑшаҫҫӗ.

**Н. ДИМИТРИЕВА.**

**Кӗскен**

## Куҫман пурлӑх ыйтӑвӗсемпе

Куҫман пурлӑх ҫынсем хушшинче тӑтӑшах ыйтусем ҫуратать. Ҫакна шута илсе Росреестрӑн Чӑваш Республикинчи Управленийӗн Муркашри пайӗ ҫу уйӑхӗн 23-мӗшӗнче Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫин участникӗсем тата инвалидчӗсем, тыл ӗҫченӗсем, уйрӑм вӑрҫӑсене хутшӑннисем, ҫар конфликчӗсенче пулнисем валли (вӗсен тӑванӗсем те пыма пултараҫҫӗ) консультаци кунӗ ирттерет.

Консультацисем тӳлевсӗр. Йышӑну вӑхӑчӗ 9 сехетрен пуҫласа 15 сехетчен. Тухса канаш памалла пулсан 63-1-34, 62-1-47 телефонсемпе заявкӑсем йышӑнатпӑр.

**Патриот воспитанийӗ**

## Финал вӑййисем

Ӗнер, майӑн 20-мӗшӗнче, районти ҫамрӑк армеецсен юхӑмӗн "Зарница" тата "Орленок" хӗрӗх улттӑмӗш финал вӑййисем пуҫланчӗҫ. Сывӑ пурнӑҫ йӗркине тытса пурӑнма, йывӑр лару-тӑрура харпӑр хӑйне тытма вӗрентекен тата ҫамрӑксенче патриот туйӑмне вӑйлатма пулӑшакан ӑмӑртусене районти шкулсен "Орленок", "Зарница" командисем тата ҫарпа патриот клубӗсем хутшӑнаҫҫӗ.

Вӑйӑсем ирттерме кӑҫал Лантӑш вӑрманӗнчи уҫланкӑна суйласа илнӗ. Район администрацийӗн вӗренӳ, ҫамрӑксен политики тата физкультурӑпа спорт пайӗн хушӑвӗпе районти ҫамрӑк армеецсен юхӑмӗн вӑййисен тӗп судйи пулма ДОСААФ-ӑн вырӑнти уйрӑмӗн председательне В. Львова, комендант пулма ачасемпе ҫамрӑксен спорт шкулӗ – "Сывлӑх" ФСК директорне А. Куликова ҫирӗплетнӗ.

Виҫӗ куна тӑсӑлакан вӑйӑсенче ачасем хӑйсене пур енӗпе те тӗрӗслӗҫ. Стройра утма пӗлни, чӑрмавсене сирсе чупни, ишесси, шывра теприне ҫӑласси, пӑшалтан тӗл пересси тата ытти нумай-нумай тӗрӗслев кӗтет ачасене – вӑйӑсене обязательнӑй йӗркепе пурӗ 13 тӗрлӗ тупӑшу кӗртнӗ. Унти теори блокӗнче кӑна 7 тӗрлӗ конкурс пулнине шута илсен ачасен тар кӑлармалӑх пур.

Ҫамрӑк армеецсен юхӑмӗн "Зарница" тата "Орленок" хӗрӗх улттӑмӗш финал вӑййисене ӗнер каҫхине савӑнӑҫлӑ лару-тӑрура уҫрӗҫ. Вӑйӑсем мӗнле иртнипе тата вӗсен пӗтӗмлетӗвӗпе хаҫатӑн ҫитес номерӗнче паллашма пултаратӑр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Ветеринари ĕçĕ çапла аталаннă

Истори çулĕ – вулавçă куçĕпе

Кăçал районăмăр 70 çул тултарнă май пирĕнтен кашниех тăван ен аталанăвĕ çине истори енчен пăхать. Иртнĕ çулсенче мĕн пулса иртнине, район экономики епле аталаннине паянхи çамрăксене тĕплĕ каласа пани хăйсен ĕç ĕмĕрне аталану куçĕпе пăхакансемшĕн пысăк утăм пуласси пирки манăн пĕр иккĕленӳ те çук. Çапла шутласа алла ручка тытрăм. Манăн паянхи сăмахăм – районта выльăх-чĕрлĕх сывлăхĕшĕн тăрăшнин, çак отрасль аталанăвĕшĕн кĕрешнин çул-йĕрне çутатса парасси пирки.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕ çĕр-шыв аталанăвĕн кирек-хăш тапхăрĕнче те пирĕн тăрăхри халăх хуçалăхĕн уйрăлми пайĕ пулнă. Нумай çын унăн пулăшăвĕпе вăхăтлă усă курнă. Çавăнпа та выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци кăçал хăйĕн 50 çулне паллă тунине ырă кăмăлпа йышăнатăп. Çак аталану çулне усса пама паян хамăн тӳпене хыватăп.

Ветеринари ĕçĕ Нискасси тăрăхĕнче 1938–1939 çулсенчех аталанма тытăннă. Тинтерех йĕркеленнĕ колхозсемшĕн унăн пĕлтерĕшĕ пысăк пулнă. Малтанхи çулсенче çак ĕçе пирĕн патăмăрта Андрей Никифорович Анчиков йĕркелесе пынă. Ялта ятарлă çурт-йĕр пулманран ветеринар ĕçне вăл хăйĕн кил-çуртĕнче йĕркелесе пурăннă. Ял çыннисенчен выльăх тухтăрĕ сахал мар ырă ят илтнĕ. Ун хыççăн вăл пуçланă ĕçе хăйĕн кил-çуртĕнчех Владимир Михайлович Анчиков йĕркелесе пынă. Çумăрне-юрне, сиввине-ăшшине пăхмасăрах чĕненсем патне вăхăтра çитсе тивĕçлĕ пулăшу панипе асра юлнă вăл аслă ăру асĕнче.

1953 çулта яла аслă пĕлӳ илнĕ выльăх тухтăрĕ Римма Семеновна Титова килнĕ. Вăл ку ялтан пулманран ял çыннисен выльăхĕсене пăхассине Мария Васильевна Сарилова килĕнче пурнăçланă, мĕншĕн тесен вăл конюх пулнă тата ямщик ĕçĕсене пурнăçланă. Çав вăхăтри выльăх тухтăрĕн вырăнтисемсĕр пуçне Юнкă, Елкино, Янăм ялĕсенче пурăнакансен выльăх-чĕрлĕхне те пăхса-сыватса тăмаллă пулнă.

Римма Семеновна çемье çавăрса Мăн Сĕнтĕре куçса кайсан, 1955 çулта вырăнти выльăх тухтăрĕсене Яков Иванович Кожевников ĕçлеме пуçланă. Вăл та ĕçсене М. Сарилова килĕнчех пурнăçланă. Выльăх тухтăрĕ лашапа ялсем тăрăх çӳренĕ, эмел патне те лашапах кайса килнĕ. Хăйĕн кил-çуртĕнче ветеринари участокĕ тытнăшăн кил хуçине ун чухнехи вăхăтра районтан вутă-шанкă, утă хатĕрлеме курăк çулмалли лаптăксем уйăрса панă, Нискасси колхозĕ сĕлĕпе тивĕçтернĕ.

Выльăх тухтăрĕнче ĕçлеме пуçласанах Яков Иванович Нискасси колхоз правленийĕ умне ветеринари участокĕн çуртне тума ыйту лартнă. 1957 çулта ял çумĕнчи çĕнĕ çуртра ветучасток ĕçлеме пуçланă. Участока çĕнĕ штат хушса панă: выльăх тухтăрне Юлия Малышева ветфельдшер пулăшма тăтнă. Çулсем иртнĕ, ял хуçалăхĕ аталаннă, çĕнĕлĕхсем çуралса вăй илнĕ. Çак юхăмра ветеринари участокĕ те пĕр вырăнта тăман.

Ветеринари участокĕнче 1974 çулта Валентина Владимировна Ермолаева ветфельдшер ĕçлеме пуçланă та паян кунччене вăл кунта. Çак хушăра Хусанти ветеринари академийĕнче куçăмсăр майпа вĕренсе вăл 2002 çулта аслă пĕлӳллĕ выльăх тухтăрĕ пулса тăчĕ.

Пĕр вăхăтра Нискасси, Ярославка, Чемей тăрăхĕсенчи ялсем пĕр пĕрлешӳллĕ хуçалăхра ĕçлесе пурăнчĕç. Кашни бригадăрах лаша витисем пулнăччĕ, ĕне сумалли тата сысна ĕрчетмелли икшер ферма ĕçлетчĕ, сурăх фермисем те пурччĕ. Ял хуçалăхĕнче вăй хуракансем мал ĕмĕтпе ĕçлесе пурăнатчĕç. Выльăх-чĕрлĕх йышлă пулнăран вырăнсенче ветеринари ĕçченĕсем те хутшăнчĕç. Вĕсен ĕçне ветеринари участокĕ йĕркелесе пыратчĕ. Çав çулсенче ветучастока тата санитарка штачĕ хушса парчĕç.

26 çул пĕр улшăнмасăр вăй хунă хыççăн Яков Иванович 1981 çулта тивĕçлĕ канăва тухрĕ. Хăй хыççăн ырă ят çеç хăварчĕ вăл. Вăл пуçланă ĕçе 1982 – 1984 çулсенче Николай Семенович Яковлев ертсе йĕркелесе пычĕ. Ăна районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцине ĕçлеме куçарсан ветучасток тилхепине Мария Димитриевна Попугаева тытрĕ. 2010 çулта тивĕçлĕ канăва тухичченех ырă ятпа ĕçлерĕ вăл хăй суйласа илнĕ тата çӳлти пуçлăхсем шаннă ĕçре.

2011 çултанпа пирĕн ветеринари участокне Эдуард Вячеславович Савельев ертсе пырать. Хальхи вăхăтра кунти выльăх тухтăрĕсем фермерсен фермисенчи тата ялта пурăнакансен килти хушма хуçалăхĕсенчи выльăх-чĕрлĕхе пăхса тăрассипе тимлеççĕ. Коллективăн ĕç никĕсĕнче – профилактикăна вăхăтра та пахалăхлă ирттересси. Ялта пурăнакансем вĕсем хăйсен ĕçне лайăх пĕлнине курăççĕ, выльăх тухтăрĕсем çине пысăк шанăç хураççĕ.

**Н. ПЕТРОВ.**

Нискасси ялĕ.

01 пĕлтерет

## Лагерьсем ачасене кĕтеççĕ

Пире хăратакан "хĕрлĕ автан" пурсăмăра та куллен сыхăра пулмаллине аса илтерсех тăрать. Раççей Федерацийĕн "Пушар хăрушсăрлăхĕ çинчен" саккун та кунта çирĕп йĕрке ыйтать.

Умра – ачасен çуллахи каникул кунĕсем. Çак тапхăрта пиншер ача сывлăха çирĕплетмелли лагерьсенче канать. Кунта ачасене йышăнма епле хатĕрленипе иртнĕ кунсенче тĕллевлĕ тĕрĕслевсем ирттертĕмĕр. Тупăннă ситменлĕхсене сийĕнчех пĕтерме май килнĕрен лагерьсем ачасене йышăнма пĕтĕмĕшле хатĕр.

Район территорийĕнчи тăватă лагерьтен "Лесная сказка" ачасене йышăнма уйрăмах тăрăшуллă хатĕрленнĕ. Кунти ĕçченсем ачасем лагере килме пуçласан вĕсемпе пушар хăрушсăрлăхĕпе вĕренӳ ирттересси пирки те калаçрĕç.

– Ачасене пушар хăрушсăрлăх правилисене вĕрентесси – пирĕн çулленхи тĕллев, – терĕç сывлăха çирĕплетмелли лагерь ĕçченĕсем. Вĕсемпе килĕшмесĕр майĕ те çук.

## Вучах чĕртнĕ те...

Вăрăран юлать те пушартан юлмасть. Çакна ăнлансан, сыхлану та тивĕçлĕ шайра пулмалла. Анчах... Районта тухакан пушарсен сăлтавĕсене тишкерсен çынсем асăрханулăха малти вырăна хуманни курăнать.

Кăçалхи çу уйăхĕн 19-мĕшĕ тĕлне районта алхаснă 17 пушартан (пĕлтĕр 19 тĕслĕх пулнăччĕ) "Автотранспортник-3" сад юлташлăхĕнче майăн 10-мĕшĕнче пулнă пушар уйрăм тимлĕх пирки калать. Кил хуçи дача çуртĕнче кăмака чĕртнĕ те тимлĕх пирки маннă. Кăмака тата мăрье юсавсăр пулнипе "хĕрлĕ автан" кĕске вăхăтрах çурта хăй аллине илнĕ.

Çу уйăхĕн 1-мĕшĕнче Турай ял тăрăхĕнчи Анаткассинче автомашинăри электропроводка кĕске замыкани панипе тухнă пушарта кил хуçи ăсталанă машинăпа пĕрле сарай та кĕлленчĕ. Çак пушар та çу кунĕсенче тимлĕхе çӳллĕ шайра тытмалли пирки асăрхаттарать.

**О. БАСКАКОВ,**
**патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене вăхăтлăх туса пыраканĕ.**

Федераци миграци службинчен

# Вырăс чĕлхи пулăшать...

Гражданcене хăйсем пурăнакан вырăнта вăхăтра регистрацилесси – Раççей Федерацийĕн Чăваш Республикинчи федераци миграци службин управленийĕн районти территори пункчĕн тĕп ĕçĕсенчен пĕри. Кун хыççĕнче конкретлă çынсен ĕçĕ-хĕлĕ, пурнăç аталанăвĕ тата вăя кĕрсе пыракан çĕнĕлĕхсем тăраççĕ.

Кăçалхи ака уйăхĕн 20-мĕшĕнче "РФ гражданлăхĕ çинчен" саккуна тата Раççей Федерацийĕн уйрăм саккун акчĕсене" çĕнĕлĕхсем кĕртнĕ.

Çĕнĕ саккун вырăс чĕлхипе çăмăллăн тата тăтăш усă куракан ют çĕр-шыв гражданĕсене тата гаржданлăхсăррисене Раççее кĕме тата кунта пурăнма ирĕк илме, каярахпа Раççей гражданствиллĕ пулма çăмăллăх парать.

Ют çĕр-шыв гражданĕсене тата гражданлăхсăррисене вырăс чĕлхипе пурăннине йышăнма Раççейри Федераци миграци службин территори органĕсенче миграци службин ĕçченĕсенчен ялан ĕçлекен комиссисем йĕркелеççĕ. Пирĕн республикăра çак ĕç вĕçленсе пырать.

Ятарлă заявленипе тухнă хыççăн асăннă комиссире ют çĕр-шыв гражданĕсемпе тата гаржданлăхсăррисемпе тĕл пулса калаçнă тата вăл тăратнă документсене тĕрĕсленĕ хыççăн çав гражданина вырăс чĕлхипе ирĕклĕ тата тăтăш усă куракан тесе йышăнма пултараççĕ. Комисси йышăнăвĕ ыйтса çыракана Раççейре пурăнма ирĕк ыйтса заявлени çырма тата Раççей Федерацийĕн гражданинĕ тесе шутлама ыйтма çул усать.

Комисси хăйне вырăс чĕлхипе çăмăллăн тата тăтăш усă курать тесе йышăнмасан гражданин çав комиссисен тепĕр хут заявленипе тухайрать, анчах çултаlăк иртсен тин.

Раççейре пурăнма ирĕк ыйтса çырнă заявление пăхса тухас вăхăт – 6 уйăх, Раççей Федерацийĕн гражданлăхĕ пирки – 3 уйăх.

**Л. ПЛЕЧОВА,**
**федераци миграци службин районти территори пункчĕн пуçлăхĕ.**

Спорт

# Пирĕн ентеш – Шупашкар чемпионĕ

Чăваш Республикинче уйăхра пĕрре спорт кунĕ ирттересси ырă йăлана кĕрсе пырать. Çак ĕç сывă пурнăç йĕркине çывăх тăнăран тата вăл çамрăксен пуласлăхĕпе тачă çыхăнура пулнăран спорт кунне ялсенче, район центрĕсенче тата хуласенче пысăк хавхаланупа ирттересси пурнăçа кĕме пуçларĕ. Унта тĕрлĕ ӳсĕмри çынсем активлă хутшăнни вĕсем пирĕн пурнăçра сывă пурнăç йĕрки кашниншĕнех пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнланнине çирĕплетет.

Спорт кунĕсем ирттернипе пĕрлех спортăн тĕрлĕ тĕсĕсемпе уйрăм ăмăртусем, йăлана кĕнĕ чемпионатсем йĕркелени вĕсене кăмăллакансем хăйсен ырă пуçарăвне манманни пирки калать. Ку вара çĕнĕ ĕмĕттĕллевсем çуратать, çамрăксен малашлăхĕ пуррине ăнлантарать.

Кăçал вырăс шашкипе çӳллĕ шайра районăн 32-мĕш чемпионачĕ иртрĕ. Нумайăшăн вăй виçрĕç унта. Хĕрӳ кĕрешӳре Муркашри тĕп больницăри аслă категориллĕ травматолог-ортопед Л. Андреев 18-мĕш хут район чемпионĕ пулса тăчĕ. Хыççăнхи вырăнсене В. Егоровпа А. Ермолаев тивĕçрĕç. Хĕрарăмсем хушшинче çĕнтерӳçĕсен пъедесталне А. Авдеева, Н. Репина, А. Репина йышăнчĕç. Çакăнти çĕнтерӳпе пирĕн пултаруллă ентешсем – Л. Андреевпа А. Авдеева – Шупашкар хулин чемпионатне хутшăнма ирĕк çĕнсе илчĕç.

Тĕп хуламăрта вырăс шашкилле выляссипе Шупашкар хулин чемпионачĕ иртни – спортăн çак тĕсне юратакансемшĕн хăйне евĕр парне. Çавăнпа та шашкăлла выляма юратакан тĕрлĕ çĕрти çĕнтерӳçĕ шашка хăми умне йышлăн ларчĕ. Кашни парти – ылтăн виçеллĕ. Ăмăрту вĕçленнĕ тĕле пирĕн ентешсем ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăни паларчĕ. Çапла вара Леонид Андреев Шупашкар хулин чемпионĕ ята тивĕçрĕ, Алевтина Авдеева хĕрарăмсем хушшинче кĕмĕл призер пулса тăчĕ.



Хула чемпионачĕ хыççăн эпĕ Леонид Николаевичпа уйрăммăн тĕл пулса калаçрăм. Муркашри тĕп больницăра 36 çул ĕçлекен пысăк категориллĕ травматолог-ортопед хăй ĕçĕнче чăн-чăн ăста пулнине кунашкал специалистсем республикăра та темиçен кăна пулни çирĕплетет. Хăйĕн тĕп ĕçĕпе пĕрлех хирург, нейрохирург сертификачĕсене илнĕ ентешĕмĕр ĕмĕрĕпех шашкăпа туслă пулнине никампа та пытарма çук. Çавăнпах вăл спортăн çак тĕсĕ çине пысăк тимлĕх уйăрать.

– Пирĕн районта шашкăлла выляссипе питĕ анлă сарăлнă. Урăх нихăш районта та ку енĕпе пирĕн патăмăрти чухлĕ спорт мастерĕн кандидачĕ çук. Анчах юлашки çулсенче шашка вăййи çине тимлĕх уйăрасси уксахлама пуçлани сисĕнет. Уйрăмах ачасем хушшинче. Çав вăхăтрах шашка вăййипе чи сумлă çынсем интересленнĕ. "Шашка вăййи – шахмат амăшĕ, тивĕçлĕ амăшĕ", – тенĕ шахматла выляссипе тĕнчери иккĕмĕш чемпион Эмануил Ласкер. Шашка вăййипе интересленекен çакна хирĕçлеймест те. Çак вăйă ăстăна çирĕплетет, шухăшлава лайăхлатать, кирлĕ вăхăтра тивĕçлĕ йышăну тума вĕрентет. Эпĕ хам та шашка вăййине тав тăватăп. Шашкăпа туслă пулни мана пурнăçра та, ĕçре те пĕрре мар пулăшу пачĕ. Вăл малашне те çаплах пуласса шанатăп. Хам тĕслĕх çинче ыттисене те, уйрăмах шкул ачисене, шашкăпа туслашма сĕнетĕп, – терĕ Леонид Николаевич шашка вăййине хăйĕн пурнăçĕ урлă çутатса.

**А. ПЕТРОВ.**

Шкулсенче

# Тимлĕх никĕсĕнче – ял пурнăçĕ



Ыранхи кунпа пурăнакан ача-пăчана тĕрĕс воспитани парса ӳстерессине тĕп вырăнта тытать. Шăпах вĕсем – пирĕн ĕçе малалла тăсаканнисем, ĕмĕтсене пурнăçа кĕртекеннисем, çĕнĕ технологисене алла илсе кашнин патне çитерекеннисем. Тĕрĕс воспитани парса ӳстерни ачасем – паянхи ялсемпе ял хуçалăх предприятийĕсен тăнăç пуласлăхĕ, анлă малашлăхĕ. Шурчари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул директорĕпе Лира Кудашовăпа ирттернĕ калаçу пирĕн хăй тĕллĕнех ял пурнăçĕ, паянхи шкул ачисен малашлăхĕ çине кайрĕ.

– Пирĕн шкул коллективĕ пурнăç уттинчен юлмасăр аталанса пырать. Ачасене ытлă-çитлĕ ăс парса пурнăç çулĕ çине кăларассине, вĕсен аталанăвĕн пуçламăш утăмĕсенчех ял çыннин тата çĕр ĕçченĕн пурнăçне ăша хывассине хамăр ĕçĕмĕрте тĕп вырăнта тытатпăр. Нумай ача ашшĕ-амăшĕ е аслăрах тăванĕ хамăр енре ырă ĕçпе сумлă ята тивĕçни – ачасемшĕн çирĕп тĕслĕх. Тăван енпе, вырăнти ял хуçалăх предприятийĕпе тачă çыхăнура пулни эпир хамăр ĕçре пĕччен марри пирки калать. Ку вара пире вĕрентӳ малашлăхне çирĕп пăхма май парать, – терĕ пĕрле ĕçлекенсене пĕр çĕре пухса Лира Николаевна.

Шкул ертӳçин сăмахне ытти вĕрентекен хăйĕн ĕçри ӳсĕмĕсемпе çирĕплетрĕ. Вĕсем вара кашнийĕнех пур, пулĕç те. Паянхи сăн ӳкерчĕкре **(сулахайран сылтăмалла)**: малти ретре – чăваш чĕлхипе литератури 33 çул вĕрентекен Нина Тюрина, шкул коллективне 18 çул ертсе пыракан Лира Кудашова, 12 çул пуçламăш классене вĕрентекен Ольга Семенова; хыçалти ретре – ачасене 14 çул кĕвĕпе истори тата обществознани предмечĕсемпе ăс паракан Петр Борзаев, 10 çул аслă вожатăйра вăй хуракан Наталия Борзаева, шкулта пĕтĕмпе 19 çул ĕçлекен (халĕ – директор çумĕ) Татьяна Андреева, чĕрĕк ĕмĕре яхăн ачасене физкультурăпа туслă тытакан Олимпиада Бардасова.

Туслă коллективăн тĕллевлĕ ĕçĕ ял аталанăвĕшĕн тулăх çимĕç парасси пирки иккĕленместĕп.

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Администрация Моргаушского района сообщает о наличии земельных участков

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:000000:4755, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, для ведения прудового хозяйства, общей площадью 11500 кв.м., заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:000000:4784, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, для ведения прудового хозяйства, общей площадью 37750 кв.м., заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:080403:218, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства, общей площадью 3532 кв.м., заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060402:709, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, для установки временных сооружений (гаража), общей площадью 30 кв.м., заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:120201:176, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства, общей площадью 6233 кв.м., заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:271101:134, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Падаккасы, для установки временных сооружений (погреба), общей площадью 20 кв.м., заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:060402:708, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, для установки временных сооружений (сарая), общей площадью 105 кв.м., заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Продаем: доски 25–50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 6-10.




Организация реализует: песок речной, гравмассу (ОПГС), щебень различных фракций. Без посредников. Низкие цены. Шешкарская пристань, Моргаушский район. Тел.: 8-927-995-07-51, 8-937-384-06-50. 10-19.

## Пĕлтерӳсем. Объявления

ПРОДАЮ ГРАВМАССУ, ПЕСОК, КЕРАМЗИТ, БЛОКИ, КИРПИЧ. Тел.: 8-905-199-69-33. 7-27.

ПРОДАЮ ПЧЕЛОСЕМЬИ, ПЧЕЛОПАКЕТЫ И МЕД. Тел.: 8-908-309-66-75. 2-10.

ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ: 25х100; 25х110; 25х120; 25х130; 25х150; 25х200; 50х120; 50х150; 50х180; 50х200. БРУСЬЯ: 100х100; 100х150; 100х200; 150х150; 150х200. БЛОКИ, КИРПИЧИ, ЦЕМЕНТ. Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 2-10.

Требуется продавец в магазин стройхозтовары «У Вадима», расположенного на территории рынка с. Моргауши. Тел.: 8-927-846-73-91.




25 мая 2014 года на центральном рынке с. Б. Сундырь ОАО «Плодопитомник» г. Лысково реализует саженцы плодово-ягодных и декоративных культур, роз, хвойников. Весь товар сертифицирован. Цены от производителя. Тел.: 8(83149)5-42-93.

Отдаю щенков в хорошие руки. Продаю барашину. Тел.: 8-927-857-98-25.

* * *

Услуги мини-эскаватора. Выполняем работы по прокладке коммуникаций, копке фундамента и т. д. Ковши 60 см, 20 см. Ширина экскаватора 1м 50 см, вес 3 т. Цена: 1000 руб/час. Выезд. Тел.: 8-987-660-83-82. 1-8.

* * *

Продаю квартиру, 42 м², в д. Москакасы, в новом доме, после ремонта, балкон застеклен, пластиковые окна. Тел.: 8-937-374-04-54. Татьяна.

* * *

Продаю муку 1 сорта по цене 13,50 руб. (50 кг). Доставка. Возможен обмен на картофель. Тел.: 8-927-860-04-78.

* * *

Çĕр сутатпăр. Çатракасси ялĕ. Тел.: 8-937-390-61-01.

* * *

Продаю зерно. Тел.: 8-937-011-79-89. 1-2.

* * *

Принимаем картофель продовольственный по 17 руб. за 1 кг, в любом количестве, на территории «Сельхозтехники» в с. Моргауши. Без выходных. С 9-00 ч. до 18-00 ч. Тел.: 8-965-688-63-06.

Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 30-68.

СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ. АКЦИЯ!!! Снижение цен! ТРИКОЛОР, НТВ+, ТЕЛЕКАРТА от 3000 руб. Эфирные цифровые приемники от 1200 руб. Обмен старых ресиверов на новые! Дилер, установщик по району. Тел.: 8-906-385-29-30. 1-10.

Консалтинговая компания «ВИКТОРИЯ»
* Представительство интересов в судах;
* Подготовка исков, договоров, жалоб;
* Сделки с недвижимостью, в т.ч. с земельными участками;
* Риэлторские услуги (покупка, продажа, аренда);
* Услуги по оценке недвижимости;
* Взыскание по КАСКО, ОСАГО;
* Регистрация, ликвидация организаций, ИП;
* Бухгалтерский и кадровый учет.

Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119
Тел.: 62-4-43, сот. 8-903-358-64-48
г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4а. Тел. 44-64-48
сайт: www.victoria-ooo.ru

## Самсон Гаврилович ГАВРИЛОВ



2014 çулхи майăн 13-мĕшĕнче эпир юратнă учитель пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ.

Самсон Гаврилович 1929 çулхи мартăн 28-мĕшĕнче Етĕрне районĕнчи Мăн Чураш ялĕнче çуралса ӳснĕ. Пуçламăш классенчех пуçарулăхпа, хăюлăхпа палăрса тăнă, кирек епле ĕçре те вăл ăста та маттур пулнă. Мĕн пĕчĕкрен ĕç çумне çыпăçнăскер ялан тĕрĕслĕхшĕн çуннă, вăл е ку ĕçе нихăçан та уйăрса тăман, пулăшу кирлĕ ача е çын яланах унăн тĕккине туйма пултарнă. Ку вăл ашшĕ-амăшĕ ăна тĕрĕс воспитани парса ӳстернинчен тата хăй те тӳрĕ чунлă пулнинчен килнĕ.

1949 çулта вăл учительсен Чăваш патшалăх институчĕн естествăпа географи уйрăмĕнчен вĕренсе тухнă. Биологи учителĕ çав çулхинех хăй ĕç ĕмĕрне Советски районĕнчи шкулта пуçланă. Каярах вара хамăр районти Якаткасси шкулĕнче тимлеме тытăннă.

Пуçаруллă вĕрентекен тĕрлĕ канашлăва хутшăннă, хăй мăшăрне Октябрина Семеновнăна те çакăн пек ĕçрех тĕл пулнă. Çапла вара икĕ вĕрентекен пĕр çемье çавăрса тăвата ача çуратса ӳстернĕ.

Тăрăшуллă вĕрентекен хăй пĕлĕвне анлăлатасси пирки шухăшланă. 1958 çулта Чул хулари патшалăх институтĕнчен вĕренсе тухнă. Çĕнĕ вĕренӳ çулне вара Самсон Гаврилович Муркаш район администрацийĕн вĕренӳ пайĕнче кĕтсе илнĕ. Шăпа ăна каярах Турай шкулне илсе çитернĕ. Çапла вара пултаруллă вĕрентекен хăйне тĕрлĕ должноçра тĕрĕсленĕ. Кирек епле ĕçе те вăл пысăк пахалăхпа пурнăçланă. Урока яланах тĕплĕ те анлăн хатĕрленнĕ, çапла майпа ачасене тарăн пĕлӳ пама тăрăшнă. Ĕçтешĕсем, ачасем, ял çыннисем Самсон Гавриловича Гаврилова питĕ хисеплетчĕç.

Тивĕçлĕ канăва тухнă пулин те, пирĕн хисеплĕ çыннăмăр алă усса лармарĕ, яланах активлă пулма тăрăшрĕ. Садпахча ĕçне питĕ кăмăллатчĕ, унăн ырă канашĕ вара пирĕншĕн пуриншĕн те вырăнлăччĕ. Анлă тавра курăмлăран вăл кирек епле калаçура та маттурччĕ. Ырă вĕрентекен, пултаруллă çын пирĕншĕн яланах тĕслĕх пулнă. Унăн ĕçхĕлне район тата республика шайĕнче çӳле хурса хакларĕç. Вăл тĕрлĕ Хисеп грамотипе Тав çырăвне, паллăна тивĕçрĕ.

Унăн çутă сăнарĕ, ырă ĕçĕ, анлă тавра курăмĕ яланах пирĕн чĕресенче пулĕ.

**Турай шкулĕн коллективĕ.**

Цифровое спутниковое телевидение ТРИКОЛОР - 7000 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 2-10.

Продаем керамзитобетонные блоки высокого качества, цемент, песок, гравмассу. Тел.: 8-960-307-41-78. 6-10.

НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ Тел.: 8-927-667-40-92. 2-22.

ЗАО «Чебоксарское предприятие «Сеспель» приглашает на работу электрогазосварщиков. Обращаться по телефонам: 8-937-371-84-07 или 8-960-302-15-07. 9-10.

* * *

Ĕне, вăкăр, тына, пăрусем туянатпăр. Тел.: 8-987-665-02-13. 2-10.

* * *

Кольца колодцев ж/б (замковые, простые) D-0.7:1.0:1.5, крышки, днища. Бурение индивидуальных колодцев и скважин. Доставка. Тел.: 8-902-327-82-52. 10-21.

* * *

Продается однокомнатная квартира площадью 43 м² в кирпичном доме, 3 этаж, после ремонта, с мебелью. Имеется домофон, общая входная дверь на лестничной площадке, застекленный балкон, индивидуальное отопление. Адрес: с. Моргауши, ул. Парковая, д. 4. Тел.: 8-967-790-26-46.

* * *

Продаю песок, щебень, гравмассу, бой кирпича и т. д. Доставка из с. Моргауши. Недорого. Тел.: 8-905-345-96-62. 2-2.

* * *

ЗАО «МСО «Моргаушская» реализует:
1. Кирпич М-150 в пленочной упаковке на ПД (г. Чебоксары);
2. Кирпич СУП пустотелый (борский) белый;
3. Кирпич СУП красный пустотелый. 1-2.

* * *

Продаю кур, гусят, утят, бройлеров, индюков. Доставка бесплатно. Тел.: 8-909-3000-818. 2-10.

* * *

Продаются березовые дрова. Тел.: 8-903-065-58-68. 1-3.

* * *

В ООО «Росметалл» требуются МЕНЕДЖЕР по продаже со знанием 1С, зарплата 20 тыс. руб., РАЗНОРАБОЧИЕ, ОХРАННИК. Тел.: 8(8352)37-88-48, 8(83541)66-3-84. 1-5.

## Прогноз погоды

| | среда 21 мая | | | | четверг 22 мая | | | | пятница 23 мая | | | | суббота 24 мая | | | | воскресенье 25 мая | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 | 04 | 10 | 16 | 22 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +15 | +23 | +28 | +19 | +16 | +24 | +29 | +20 | +18 | +23 | +26 | +19 | +15 | +22 | +26 | +20 | +16 | +23 | +26 | +20 |
| Давление мм | 756 | 756 | 755 | 754 | 753 | 754 | 753 | 752 | 751 | 752 | 751 | 752 | 752 | 753 | 752 | 751 | 751 | 750 | 749 | 749 |
| Влажность % | 74 | 50 | 27 | 63 | 76 | 51 | 28 | 59 | 69 | 59 | 32 | 59 | 86 | 63 | 39 | 70 | 85 | 57 | 39 | 63 |
| Ветер м/с | 3 | 1 | 5 | 2 | 5 | 2 | 5 | 3 | 5 | 2 | 6 | 2 | 4 | 1 | 2 | 3 | 4 | 1 | 4 | 2 |
| | Ю-З | Ю | З | Ю-З | Ю-З | З | З | Ю-З | Ю-З | С-З | З | С-З | З | С | З | Ю-З | З | З | С-З | Ю-З |
| Солнце восход / заход | 04:28 21:10 | | | | 04:27 21:11 | | | | 04:25 21:13 | | | | 04:24 21:15 | | | | 04:22 21:16 | | | |
| Луна восход / заход | 01:29 11:59 | | | | 01:54 13:19 | | | | 02:17 14:39 | | | | 02:39 15:57 | | | | 03:01 17:13 | | | |

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, бухгалтери - 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла таврăса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Белов А.П.
Пичете панă 20.05.2014 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 5134.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.